# ӐМСАНСА АСА ИЛЕТПӖР

## Н. С. Дедушкин ҫуралнӑранпа 85 ҫул ҫитнӗ май



1976 ҫулхи ҫулла манӑн пӗрремӗш проза кӗнеки, повеҫпе калавсен пуххи, «Ҫеҫенхир ҫилӗ» ятпа пичетленсе тухрӗ. Ун чухнехи савӑнӑҫ кап-ланӑвӗ халӗ манӑҫнӑ ӗнтӗ. Анчах пӗр саманта асра хӑварнӑ. Юлташсене кӑна мар, ятлӑ-сумлӑ писательсене те алӑ пусса ҫав кӗнекене парнелес килетчӗ. Чӑваш патшалӑх кӗнеке издательствинче ӗҫлеттӗм ун чухне. Вӑл, хальхи пекех, Ленин проспектӗнчи 4-мӗш ҫуртӑн виҫҫӗмӗш хутӗнче вырнаҫнӑччӗ. Тӑваттӑмӗш хутра «Ялавпа» «Тӑван Атӑл» журналсен редакцийӗсем тата писательсен Союзӗн правленийӗччӗ. Темиҫе кӗнеке хӗстертӗм те хул хушшине, ҫӳлти хута хӑпарса кайрӑм.

Тем вӑхӑт тӗлне пулнӑ ҫав. Пӗр алӑкне туртса пӑхатӑп — хупӑ, тепӗрне — хупӑ. Коридор пӗр вӗҫӗнчен тепӗрне утса тухрӑм. Нихӑшӗ те уҫса кӗртмерӗ. Пӑхатӑп — Союз правленийӗн председателӗн алӑкӗ яриех уҫӑ. Председатель хӑй сӗтел хушшинче саркаланса ларать.

— Кӗме юрать-и? — тесе ыйтма та ӗлкӗреймерӗм, Николай Степанович кӑшкӑрса та илчӗ.

— Шӑпах эсӗ кирлӗччӗ-ха. Кӗр-ха, кӗр часрах!

Пырса тӑтӑм кун умне. Умӗнчи кӗнекене аллине илчӗ те хуплашкине мана кӑтартма пуҫларӗ. Хам куҫа хам ӗненместӗп. Ҫапах вулатӑп: Денис Гордеев. «Ҫеҫенхир ҫилӗ».

— Ҫуррине ытла вуларӑм. Чӗлхи лайӑх. Поэзилле проза. Эх! Туса пӗтерейменни пур.

Пит ҫине тар тапса тухрӗ. Ҫӑвар уҫайми пултӑм. Николай Степанович татах «хӑртать». Мана ларма та сӗнмест.

— Ну, ҫитнӗ вӗт ӗнтӗ. Тупнӑ пархатарлӑ сӑнарсене. Сармалла кӑна пулнӑ. Марковсем, арӑмӗпе упӑшки, чӑн-чӑн коммунизм строителӗсем. Ҫеҫенхир ҫилӗн, Петя Яршовӑн, шӑп ҫавсенчен вӗренмелле пурӑнма. Паянхи ӑрушӑн та идеал пулса тӑраҫҫӗ вӗсем, Марковсем. Тепӗр хут пичетлес пулсассӑн, эп каланине ан ман. Ӳркенмесӗрех пуянлат Марковсен, арӑмӗпе упӑшкин сӑнарӗсене.

Тинех тав тума тавҫӑртӑм, юрӗ, юрӗ, ҫаплах тӑвӑп тесе каласа хутӑм.

Кашни вăхăтăн хăйĕн тĕсĕ те хăйĕн сĕмĕ. Ун чухне литература критики те, литературоведени те илемлĕ литературăри сăнарсенче пархатар ширанă. Тупайсан çавна, писателе ырланă, тупаймасан — ятланă. Николай Степанович та хăй вăхăчĕн ачи пулнă.

Халĕ социализм реализмне çĕрти — çӳлти сăмахсемпе пуринпе те вăрç — атпăр. «Конъюнктура», «схема», çавсен вăхăтĕнчи ытти сăмахсем чĕлхе çине те килеççĕ. Литература конъюнктури ĕнер кăна пулман. Паян та пур вăл. Ыран та пулать. Анчах социализм реализмĕ çуратнă идеалсем паян çук. Мĕн тери кирлĕ вĕсем пире паян. Ыран тата та кирлĕрех пулĕç.

Николай Степанович Дедушкин Чăваш писателĕсен Союзне ертсе пынă çулсем çинчен (1967—1978) эпир ăмсанса кăна калаçма пултаратпăр. Ун чухне литература пурнăçĕ вĕресе кăна тănă. Çамрăк авторăн пĕрремĕш проза кĕнекине вуласа хак пама правлени председателĕ хăй май тупнă пулсан, литература консультанчĕсем, литература критикĕсем, писательсем хăйсем илемлĕ сăмах тĕнчинчи кашни пулăма еплерех курса тăнине ăнланма пĕрре те йывăр мар.

Каярахпа, Николай Степанович председатель ĕçĕнчен кайсан, манăн та литконсультант пулса ĕçлеме тӳр килчĕ. Союза пырса кĕнĕ кашни алçырăва шута илсех пыраттăмăр та, пĕр листа та çухалман. Çулсерен 700 автор листи таран проза произведенийĕсем вулама тиветчĕ. Чăваш литератури мĕн тери пуян пулнине, реформа тее — теех мĕн чухлĕ илемлĕх пурлăхне çухатнине чунпа та чĕрепе туйса тăратăп паян.

Николай Степанович союз пуçĕнче тăнă çулсем чăваш литератури тăвалла та тăвалла талпăннă çулсем пулнă. Правлени председателĕ хăй тухăçлă писательсен йышĕнчех пулман. Пултаракансене, шырас текенсене май тăва — тăва панă. Хваттерсĕррине хваттерлĕ тунă, çамрăксене çул уçа — уçа панă, темплансене кĕме пулăшнă. Пуринчен те пахи вара — тĕрлĕ — тĕрлĕ халăхсен литературисене пĕр — пĕринпе туслаштарни. Вырăс, украина, белорус, тутар, пушкăрт, якут, ирçе, мари, Кавказ, ытти нумай — нумай халăхсен писателĕсене эпир хамăр йыша пĕлсе тăнă пекех пĕлсе тăнă. Эпир вĕсене чăвашла, вĕсем пире хăйсен чĕлхилле куçарнă.

Пурнăç çаврăмăн — çаврăмăн пырать, теççĕ. Урăх сĕмпе пулсан та, писательсен ун чухнехи пурнăçĕ çаврăнса килтĕрччех. Шанса та ĕненсе кĕтетĕп çавна.

Николай Степанович пирĕнтен уйрăлса кайни тем вăхăт мар — ха. Чылайăшĕ ăна чĕррĕн курнă, чылайăшĕ унпа пĕрле ĕçленĕ. Çапах та ун биографийĕн хăшпĕр саманчĕсене аса илтерем.

1915 çулхи пуш уйăхĕн 28 — мĕшĕнче Тутар республикинче, Пăва районĕнчи Элшелте çуралнă. Теччĕре, Хусанта, Шупашкарта вĕреннĕ. Çамрăк чухне Теччĕ районĕнчи Кăнна Кушкинче чăваш чĕлхипе литературин учителĕ, Чăваш патшалăх педагогика институтне пĕтерсен, çав институтра преподаватель пулса ĕçленĕ.

1944 çулта ăна Совет Çарне илеççĕ. Çирĕм çул службăра пулнă, ахаль салтакран пуçласа полковнике çити ӳснĕ.

Литература ĕçне çамрăклах пуçăннă та ĕмĕр тăршшĕпех пăрахман. Вăл чăваш писателĕсен Аслă вăрçă вăхăтĕнчи ĕçне — хĕлне тĕплĕн тĕпченĕ. Çак темăпах диссертаци çырнă. Унăн паллăрах кĕнекисем çаксем: «Пăшалпа та, перопа та», 1970; «Чăваш халăх поэчĕ Александр Алга», 1973; «Писатель — салтак», 1974; «Самана уттипе», 1975; «Аслă çĕнтерӳ çулĕпе», 1985.

**Денис ГОРДЕЕВ**

*Сăн ӳкерчĕкре: Награда илнĕ ӳнерçĕсем хушшинче — Л. П. Прокопьев, Н. С. Дедушкин, А. С. Артемьев, О. Г. Денисова, Е. И. Ефремова, В. А. Долгов, П. М. Градов, Н. И. Викторов. 1980 çул.*